Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с обучением на чувашском языке
2017-2018 учебный год. 9 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 120 минут

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, ашшĕ ятне, хушаматне (псевдонимĕ пулсан – псевдонимне те) туллин çырăр.

(1)*Чĕлхемĕр черчен те чипер, пуян та янăравлă тееетпĕр.* (2)*Анчах тус-тантăша вăлтма, атте-аннене пуçтай калама, туйра айташ выляма, кĕрекере «Алран кайми» юрлама, керемре сăвап тума пĕлетпĕр-и-ха?* (3) *Çак эткерлĕхе ăша хывăпăр, вара чĕлхемĕр хăватне эпир те тӳрре кăларăпăр.*

2. Маларах панă текстран паллă ячĕсене çырса илĕр, унтан вĕсене вăйлă виçере çырăр.

3. 1-мĕш предложенири глагола тĕрĕс çырнă-и? Хăвăр шухăша ĕнентерĕр.

4. Анаграмма тупсăмне пĕлĕр.

Эс мана тĕшмĕртмеллех –
Кайăк-кĕшĕк ячĕ эпĕ.
ЫлмаштаР ик сас палли –
Шыв ĕçмешкĕн кирлĕ эпĕ.

5. 1-мĕш предложени хутлă е хутсăр пулнине кăтартăр, хăвăр шухăшăра ĕнетерсе парăр.

6. Руна çырăвĕсенче *элтĕпер* сăмах тĕл пулать. Вăл мĕнле сăмахсенчен пулнă, мĕне пĕлтернĕ?

7. XI ĕмĕрте Юсуп Паласахунĕ сăвăç тĕрĕксен ăслă канашĕсене, вĕрентсе каланисене пухса кĕнеке хатĕрленĕ. Çав кĕнеке мĕн ятлă?

8. Мĕн вăл публицистика? XX ĕмĕр пуçламăшĕнче ĕçленĕ ăнăçлă публицистсене (6-ран кая мар) палăртăр.

9. Çак йĕркесен авторне, хайлав ячĕпе жанрне палăртăр.

«*О! Мĕне пĕлтереççĕ чаплă художниксен пейзажĕсем çут çанталăкра пуррипе танлаштарса пăхсан! Вĕсем ӳкерниче питĕ ăста евĕрлеме пĕлни кăна тĕлĕнтерет, урăх нимĕн те тупаймастăн. Кунта пачах урăхла, чун-чĕре каласа ăнлантарма çук киленĕçпе ирĕлет, юлашкинчен вара çут çанталăкăн темĕнле курăнми вăйĕнчен тĕлĕннипе çухалсах каятăн*».

10. П. Хусанкайăн Наталийĕ хăйĕн тĕррине мĕнле тĕссемпе тĕрлет?